ŋqdqʎeʎ bƐ dədƐbʎзə d ɕɔɑƃɔʎ Ɉqddʎqʎè

И. Н. Юркинъ.

ХАЛАПСЕМ.

(СКАЗКИ).

На чувашскомъ языкѣ.

КАЗАНЬ.
ЦЕНТРАЛЬНАЯ ТИПОГРАФІЯ.
1907.

ŋqdqʎeʎ bƐ dədƐbʎзə d ɕɔɑƃɔʎ Ɉqddʎqʎè

ŋqdqyeꝉ bƐ dədƐbꝉзə d ɕəɑbɕꝋ Jqddꝉqyè

Всесоюзная
БИБЛИОТЕКА
имени
В. И. ЛЕНИНА
3587-45

ХАЛАПСЕМ.

(СКАЗКИ).

ПУБЛИЧ. и РУМЯНЦОВ. МУЗЕЙ
БИБЛІОТЕКА

1.

Ĕçекен сăрана малтан кам тунă.

Пĕр йурлă çын пит наҭар пурăннă. Пĕре çапла хире сухана кайсан, кăнтăрла киле килеҭҭен кăнтăрлахи апата унтах çийĕп тесе шухăшласа кушалне çăкăр ҭиксе кайат̆. Хăй анине сухаланă ҭухне шуйтан аҭи вăрттăн кунăн çăкăрне вăрласа кайат̆. Ку çапла ĕçлесен, кăнтăрла çитсен çиме ларса кушалне уçса пăхат̆, çăкăрĕ çукне курсан:—«çăкăрăма кам илсе кайнă?» тесе шухăшла пуçлат̆. Никам илсе кайнине те пĕлмесĕр:—«ан тив ĕнтĕ, кам илсе кайнине Турă пĕлет пулĕ»,—тет. Пăртакçă кансан, хăй каллех—«каçҭен ĕçлемесĕр тӳсĕп халĕ», тесе тытăнҭĕ тет ĕçлеме. Каç пулсан шуйтан ывăлĕ хăйĕн пуçлăхĕ патне тавăрăнсан кунтан: «есĕ пайан мĕн турăн», тесе ыйтса пĕлет.

— «Мушикĕнне кушалĕнҭен çăкăрне вăрларăм»,—тет ҭа.

— «Çăкăрне вăрласан мушик мĕн каларĕ?» тет.

ŋqdqyeꝉ bƐ dədƐbꝉзə d ɕəɑbɕꝋ Jqddꝉqyè

ŋqdqyɐ⅄ pƎ dәdƎbʎзә d ɐɔɐqɔʎ Ɉqddʎqʎè

— «Кам илнине Турӑ пӗлет пулӗ», терӗ, тет шуйтан ађи.

— «Апла Турра асӑнђӗ пулсан, пыр, есӗ ҫав ҫынна виҫӗ ҫулђђен ӗҫлесе пурӑн!» тет.

Шуйтана хӑйне асӑннӑ пулсан, паллӑ, ҫавӑнпа ӑна апла виҫ ҫулђђен ӗҫлеттерме хушман пулӗђђӗ.

Ку шуйтан ађи ђасах ҫын пулса ҫав мушик патне хире ӗҫленӗ ҫӗре пырать те:—«мушик, есӗ мана тарҫа тыт»,— тет. Мушикӗ ӑна хирӗҫ:

— «Хам та пит йурлӑ ҫын, лашам та манӑн авӑ пит нађар, йепле сана тарҫа тытам», тет.

— «Тыт!» тет шуйтан ађи те ун патӗнђен каймасӑр.

Калаҫсан-калаҫсан мушикӗ кӑна тарҫа тытса йарать те хӑй урапа айне выртса тарҫӑ йепле ӗҫленине пӑхса выртса пуҫлать. Шуйтан ађи ӗҫлеме тытӑнсанах хӑй мушикӗн нађар лаши шуйтан хӑвађӗпе тытӑнђӗ тет темӗн тӗрлӗ вӑйпа ӗҫлеме. Сухи пуҫӗ парӑлтаттарса анђах пыра пуҫларӗ, тет. Акнӑ пӗр тыррисем ӗлӗкхине пӑхнӑ ҫӗрте уйрӑм темӗн тӗрлӗ вӑйлӑ авал пула пуҫлаҫҫӗ. Виҫӗ ҫул хушшинђе ҫапла шуйтан ађи ӗҫленӗ пирки хай мушик ђисти пуйса кайать. Кӳрши-аршисем пӗтӗмпе тӗлӗнсе тӑраҫҫӗ. Ҫапла пуйса ҫитсен, шуйтан ађи кӑна:—«епир пуйрӑмӑр ӗнтӗ, аҭа пурне те ђӗнсе ӗҫкӗ тӑвар?» тет. Хӑй малтан шуйтан ађи сӑра тӑвать, хӑмла илсе килсе йарса йӳҫӗ тет. Сӑри ӗлкӗрсен, пӗлекен тус-йышӗсене, хурӑнташсене пурне те ђӗнсе пуҫтарса ӑшӑ сӑра ӗҫтере пуҫлать. Лешсем, халиђђен сӑра ӗҫмен ҫынсем, пурте ӗҫсе ӳсӗрӗлеҫҫӗ. Тепӗр кунӗ пурте мухмӑрласа ђирлеҫҫӗ, пуҫӗсем ыратаҫҫӗ: «ку пире мӗн турӗ?» тесе ђисти тӗлӗнеҫҫӗ. Ун патне кайса унтан: «есӗ пире мӗн ӗҫтертӗн?“ тесе ыйтса пӗ-

ŋqdqyɐ⅄ pƎ dәdƎbʎзә d ɐɔɐqɔʎ Ɉqddʎqʎè